+47+4УВ

А. Ç. ПУШКИН

Пĕчĕк трагедисем

Чăваштгосиздат · 1938

А. С. ПУШКИН

МАЛЕНЬКИЕ ТРАГЕДИИ

СКУПОЙ РЫЦАРЬ

КАМЕННЫЙ ГОСТЬ

ЧУВАШГОСИЗДАТ
Чебоксары 1938

П91

А. Ç. ПУШКИН

ПĔЧĔК ТРАГЕДИСЕМ

АСĂРХАНĂ ЙĂНĂШСЕМ.

			Çапăннă:	Тӳрлетмеле:
21	стран.	6 йĕркере айалтан	Çапça	Çапса
30	„	1 „ çӳлтен	Епе	Епĕ
47	„	6 „ „	Ытла тĕрес	Ытла тĕрĕс
58	„	9 „ „	Пер-пĕрни-пе тӳрменлен-се	Пĕр-пĕрин-пе тӳртĕнлен-се
76	„	5 „ „	Хушаçса	Хушасса
83	„	6 „ „	Шăршăлан-арса	Шăршăлан-тарса

А. С. Пушкин. Маленькие трагедии. *Редакци.*

ЧĂВАШГОСИЗДАТ
Шупашкар 1938

п 91

А. Ç. ПУШКИН

П Ё Ч Ё К
ТРАГЕДИСЕМ

ХЫТКУКАР РЫЦĂР

•

Ч У Л Х Ă Н А

Ч Ă В А Ш Г О С И З Д А Т
Ш у п а ш к а р 1 9 3 8

30747 чув

Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

Редактор Н. К. ЯНГАС
Техн. редактор Ф. Я. ЯКОВЛЕВ
Обл. художника А. САВЕЛЬЕВА

Сдано
в произв. 25/X
1937 г. Подп. к печати
29-VII-1938 г. Печ. лист. 2,62
Печ. знак. 37440 в п. л. Тир. 4000 экз.
Формат бумаги 62×94¹/₃₂. Чувашглавл. № 1426. Зак.
№ 35 0. Чувашгиз № 235.

Типография № 2 Наркомместпрома,
г. Алатырь, Чувашской АССР.

ГОСУДАРСТВЕННАЯ
БИБЛИОТЕКА
СССР
им. В. И. Ленина

ХЫТКУКАР РЫЦĂР[1]

Ченстон çырнă „The covetous Knight“
йатлă траги-комедирен илнĕ сценăсем

I СЦЕНĂ

(Башӈӑра.)

Алъбӗрпе Иван

Алъбӗр.

Кирек-мӗнле пулсан та, турнирта[2] еп
Пулатăпах. Шлема кăтарт, Иван.

(Иван ăна шлемне илсе парать.)

Вăл витӗр шăтнă, пăсăлнă. Ăна халъ
Тăхăнма çук. Çӗн шлем туйанмала ман.
Ылханлă граф Делорж! хыт çапнă вăл мана!

Иван.

Хăйне те самайах лектертӗр есӗр,
Вăркăнтарайрăр çеç йӗнер çинчен,
Вăл ним пӗлми пӗр тавлăк выртрӗ; темӗн,
Сывалчӗ-ши...

Алъбӗр.

Çапах вăл шар курмарӗ;
Венеци кăкăр питлӗхӗ ванман ун,

А хăй кăкри ăна—ним чухлĕ те
Тăмасҫ; вăл тек кăкăр питлĕхĕ
Илес те çук. Мĕн-ма еп çавăнтах
Ун пуçĕнчен шлемне сĕвсе илмерĕм!
Сĕвсе илеттĕмччĕ, дамăсенчен
Йе герцăгран намăсланман пулсан.
Ылханлă граф! Шлемпа пĕрле хăҫ ун
Ман пуçăмах çапса шăтармалаччĕ.
Тумтир те кирлĕ ак. Хаљхи хутра
Герцăг стелĕ хушшинче пĕтĕм рыцăр
Йалтрарĕ атлăс-пархăт тумтирпе;
Латтăпалан пĕччен çеç пултăм епĕ.
Турнира ăнсăртран еп лекрĕм, терĕм.
Пайан мĕн калăп-ха? О, чухăн пурнăç!
Мĕн пек вăл кĕлмĕçлентерет пире!
Делорж хăй йăвăр сăннипелен манăн
Шлема ватса çумран вĕçтерейсе иртсен,
Еп, Емира шпорпа тапса, ун хыççăн
Вĕçтертĕм çавраçил пек, çарапуçăн,
Пĕчĕк пажа[3] ывăтнă пек еп ăна
Сирпĕнтертĕм çирĕм утăма; çĕкленчĕç
Ура çине пур дамăсем, Клотилдă
Шари! çеç çухăрса питне хупларĕ,
Мухтарĕç геролђдсем[4] еп çапнине.

Ун чух вĕсем, ăна-кăна туймасăр,
Мана чăнах та паттăр терĕç пулĕ!
Шлема пăснишĕн урса кайрăм еп.
Атте хыттишĕн паттăр пултăм имĕш—
Ку чăн! хытта тухма та йăвăр мар-тăр
Аттемпе пĕр çуртра пурăннă чух.
Емир мĕнле-ши ман?

Иван.

Шав уксаклаť вăл.
Сире унпа хальъ ир-ха çӳреме.

Альъбĕр.

Нимскер тума та çук: илсе йаратăп
Леш тур утне. Хаклах тăмасť-ха вăл.

Иван.

Хаклах мар та, укçи çук пирĕн хальъ.

Альъбĕр.

Мĕн тет вара сулланчăк Соломон?

Иван.

Сире тек кивçенле, заклад хумасăр,
Укçа пама пултараймастăп, тет вăл.

Альъбĕр.

Заклад! ăçтан тупас ăна ман, йавăл!

Иван.

Шанмасť çав вăл.

Альбĕр.

Мĕн тет?

Иван.

Кăхлатаҫ те хуҫкаланаҫ.

Альбĕр.

Каламалаччĕ сан ăна, аттем
Пуйан ман, жид пек, хăй те; кĕҫ-вĕҫ епĕ
Тĕпе йулап, тесе.

Иван.

Каларăм еп.

Альбĕр.

А вăл?

Иван.

Хуҫкаланаҫ, кăхлатаҫ.

Альбĕр.

О, мĕн тери ман хуйхăм!

Иван.

Вăл хăй килесшĕнччĕ.

Альбĕр.

Мухтав турра хăҫ.
Ахальӳ вĕҫертмĕп хам килтен ăна.

(*Алăкран шаккаççĕ.*)

Кам вăл?

(*Жид кĕрет.*)

Жид.

Еп—сирĕн тарçăр.

Альбĕр.

А, ман çывăх тусăм!
Ылханлă жид, хисеплĕ Соломон,
Ирт тĕпеле: каларĕç-ха, мана ес
Шанмастăн кивçен.

Жид.

Ах, уçă чунлă рыцăр,
Тупа тăватăп, тем пек парăттăм?..
Ăçтан укçа тупан? аркантăм йăлт
Пур рыцăрех шав кивçенле парса еп.
Никам та тӳлемест. Еп сирĕнтен
Ыйтасшăн, кăшт тӳлеймĕр-и...

Альбĕр.

Вăрă-хурах ес!
Укçам ман хунаса тăраҫ пулсассăн,
Еп çыхланаттăм-ши санпа? Ну, çитĕ,
Ан кутăнлан, йуратнă Соломон;
Кӳр ĕнтĕ укçуна. Пĕр çĕр червонцă
Хăвна ухтариччен силле-ха.

Жид.

Пĕр çĕр!
Ун чухлĕ еп укçа тытсан!

Альбĕр.

Итле:

Тусусене çăлманшăн намăс мар-и
Сана кăштах хăт?

Жид.

Тупатуршăн...

Альбĕр.

Çитĕ, çитĕ,
Заклад хур тетĕн ес; ак анкă-минкĕ!
Мĕнех хурайăп еп? сысна тирне-и?
Ытах мĕн хумали пулсан, ăна
Еп тахçанах сутса йараттăм-ха.
Йе рыцăр панă татăклă сăмах та
Сана çитмест-и, йытă?

Жид.

Пуçăр сывă чух,
Нумай шанчăк парат сăмахăр сирĕн.
Фламанд мулăçисен пур арчинех
Йусман[5] пекех вăл уçĕ сирĕншĕн.
Анчах мана, мĕскĕн йеврейе, есĕр
Вăл сăмаха парса, кĕтмен-хутран
Вилсе выртсан (çырлахтăр тур), вара
Тинĕс тĕпне пăрахнă шкатулкăн
Уççийĕ йевĕр пулĕ ман алра вăл.

Альбĕр.

Манран та йулĕ-ши вара аттем?

Жид.

Ăçтан пĕлен? тур çырнине пĕлеймĕн;
Каçпа сывă йаш ирпе вилет выртаҫ те,
Ăна вара курпунĕсем çинче
Ватăсемех масар çине леçеççĕ.
Барон сывах. Пурăнĕ, тур пĕлет тен,
Тата вун çул йе çирĕм-вăтăр çул вăл.

Альбĕр.

Суйатăн ес, тата вăтăр çултан
Еп аллăра пулатăп, мĕне кирлĕ
Ун чух мана укçа?

Жид.

Укçа?—укçа вăл
Пире йалан, пур вăхăтра та кирлĕ;
Анчах йаш тăккалаҫ ăна тăрлавсăр,
Уншăн укçа правурлă тарçă пек.
Старик упраҫ ăна хăй куçĕ йевĕр,
Укçа уншăн шанчăклă тусĕ пек.

Альбĕр.

О, çук! никам та мар укçа аттемшĕн,
Хăй хуçи вырăнне çеç хураҫ
Аттем ман укçана; хураҫ çеç мар-ха,

Алжир[6] чури пек, сăнчăрти йыт пек,
Хăй пăхăнса тăраҫ-ха вĕсене вăл.
Пурнаҫ хутман пӳртре, ҫийет хыт ҫăкăр,
Чĕр шыв ĕҫет, ҫывра пĕлмест, лăркаҫ
тек—
А ылттăн текех выртаҫ арчасенче.
Ан чĕн! укҫи ун хăҫан та пулсан
Йăлтах ман пулĕ-ха, ним уссăр выртмĕ.

Жид.

Чăн ĕнтĕ, баронэ пытарнă чух
Укҫа куҫҫульӳрен ытларах йухĕ.
Часрах тĕпе йулма сире тур патăр.

Альбĕр.

Amen*.

Жид.

Май пур пек...

Альбĕр.

Мĕн?

Жид.

Кăна еп хам шутлатăп-ха,
Пĕр мел пур ман...

Альбĕр.

Мĕнле мел вăл?

---

* Амин (чăн та ҫапла).

Жид.

Çаплах—
Пур манăн хам паллана пĕр старик,
Йеврей, чухăн аптекăр...

Альбĕр.

Сан йышши
Ростовшчикех-тĕр, йе кăшт тӳрĕрех вăл?

Жид.

Çук, рыцăр, Товий урăх сутăç-ха—
Вăл тумламсем тăваҫ... вĕсем питех те
Хăватлă ун.

Альбĕр.

Мĕн ĕç ман вĕсемпе?

Жид.

Пĕр виç тумлам шывпа хушса ĕççессĕн...
Тути те, тĕсĕ те ним паллă мар ун;
Вилсе выртаҫ вара етем хăсмасăр,
Вар каснине, ыратнине туймасăр.

Альбĕр.

Старику сан—
Вĕлермели имçампа сут-тăваҫ-и?

Жид.

Çапла—
Ун пек имçампа та.

Альбĕр.

Йепле? Кивçен укçа вырăнне—
Икĕ çĕр кленче имçам сĕнетĕн.
Кленчишĕн—червонцăшар. Çапла-и-ха?

Жид.

Манран кулма сире ирĕк—
Манран куçкĕретех кулатăр есĕр—
Çук; урăх шухăш ман... тен есĕр... епĕ
Вăхăт пулъ терĕм барона вилме.

Альбĕр.

Мĕн! аттене вĕлерме! Хушан ывăлне...
Им-йам сĕнетĕн и!.. Тыт, Иван, ăна!
Çĕлен, жид чунĕ, йытă! еп сана
Халех ак хапхаран çакса хуратăп,
Чухлатăн-и çакна ес!

Жид.

Виноват!
Каçарăр: еп шӳтпе...

Альбĕр.

Иван, пăйав пар.

Жид.

Шӳт турăм еп... Укçа илсе килтĕм.

Альбёр.

Тух, йытă!

(Жид тухса кайать.)

Ак ăçта илсе çитерчĕ
Мана аттен хытти! Ак мĕн тума
Сĕнейрĕ жид мана! Кӳр пĕр стакан ерех,
Чĕтретĕп еп... Укçа кирлех çапах та
Мана, Иван. Чуп-ха çав путсĕр хыççăн,
Ил унăн укçине. Кӳр-ха кунта
Чернилницă. Çырса парам расписка
Еп каскăна. Ан кӳрт тек ман пата
Ес вăл Иудăна[7]... Тен, чим, тăхта,
Аптекăрăн кĕмĕлĕсем пек, кĕрĕ
Ун укçинчен те наркăмăш шăрши...
Ерех ыйтсаттăм еп.

Иван.

Тумлам та çук
Вăл пирĕн халь.

Альбёр.

Ремон Испанирен
Кучченеçле йани çук-и вара?

Иван.

Пĕртен-пĕр пулштуха çĕркаç еп леçрĕм
Чирлĕ тимĕрç патне.

30747 чув

Чувашская Республиканская БИБЛИОТЕКА

Альбĕр.

Пĕлеп, асилтĕм...
Шыв пар еппин. Ех, ку ылханлă пурнăç!
Ĕç пĕтнĕ, йышăннă—управ тупатăп
Герцăг патне кайса еп: аттене тек,
Сакайĕнче çуралнă шăши пек,
Ан усраттартăр хăйĕн ывăлне вăл.

II СЦЕНĂ

(Подвалта.)

Барон.

Пĕр-пĕр чейе сучка хĕрарăма-и,
Йе илĕртнĕ пĕр-пĕр ухмах хĕрех те
Курма тесе йанкăс йаш кĕтнĕ пек,
Еп те, вăхăт кĕтрĕм йара-кунах
Никам пĕлмен подвалăма анма.
Телейлĕ кун! улттăмĕш арчама
(Вăл тулли мар-ха) еп каллех хуратăп
Пайан хам пухнă ылттăна пĕр ывçă.
Нумай пек куранмасть, çапах пĕчиккĕн
Ӳсет ман мул. Таçта еп вуласаттăм,
Пĕрре патша хăй çарçыннисене
Пĕр тĕмеске тăпра йăттарнă ывçăн,
Шав ӳснĕ тĕмеске—вара патша
Ун тăррине тăрса, лапамри
Шап-шур чатăрсене йе тинĕсри

Карапсене курса килленнĕ мĕн.
Çавнашкалах еп те, хам парăма
Шав ывçăн-ывçăн подвала хывса,
Ӳстертĕм сăртăма—ун тăрринчен,
Мĕн пăхăнаҫ мана, çавна курап еп.
Мĕн пăхăнмаҫ мана? еп демăн йевĕр
Пуç пулăп тĕнчипе ку сăрт çинчен;
Тăвас килсĕн—ман пулĕç керменсем те,
Ман аслă, хӳхĕм йешĕл сатсене
Нимфăсем ушкăнăн варкăшса килĕç;
Пур музă кӳрĕ парăмне мана,
Ирĕклĕ гени маншăн чура пулĕ.
Ыйхăсăр ĕç те ыр ĕç тăвакан
Хăйусăрран манран парне, чыс кĕтĕ.
Ши! шăхăрăп кăна еп, шиклĕн, шăппăн
Мĕн пур усал-тĕсел шăвайса кĕрĕ
Ман патăма, çулла пуçлĕ алла вăл,
Ман шухăша пĕлме куçран тинкерĕ.
Мана пăхăнĕç пурте, пăхăнмăп
Еп никама; еп пур ĕмĕтсенчен те
Çӳлте тăрап; еп лăпка; еп пĕлетĕп
Хам тивĕç-вăйăма; мана çитет
Çакна пĕлни те...

(*Хăйĕн ылттăнĕ çине пăхаҫ.*)

Хăй нумай та мар пек,
Анчах мĕн чухлĕ çын тĕрмешнĕ-ши
Çак ылттăншăн! Ултав, куççулĕ,
Кĕллев, ылхан мĕн чухлĕ вăл курман-ши!
Кунтах ак кив дублон... вăл акă. Пачĕ
Ăна пĕр тăлăх арăм, вăл малтан
Виç ачипе чĕркуçленсе тăрса
Ман кантăк умĕнче çур кун ӳлерĕ.
Лӳшкерĕ çăмăрĕ, хăй вырăнчен
Кĕлевçĕ арăм хускалмарĕ; епĕ
Ăна хăвса йараттăм, тем систерчĕ
Мана—упăшкин парăмне пама
Вăл килнĕ мĕн, ун тĕрмере ыран
Ларас килмен. Ак ку тата? кăна
Тибо илсе килчĕ—вăл, кахалскер,
Тилĕ пек чейескер, ăçтан-ха туптăр
Ку укçана? Йе аслă çул çинче,
Çĕрлехине, сĕм вăрманта, çынна
Çапça вĕлернĕ-тĕр... елле вăрланă...
Чăн та! кунта упраннă мулăмшăн
Тăкнă мĕн пур куççулĕ, тарĕ, йунĕ
Çĕр айĕнчен тухас пулсан, каллех
Потоп пуçланнă пулĕччĕ—вилеттĕм
Кунтах еп чыхăнса. Анчах та çитĕ...

(Арчине уҫасшăн.)

Еп, арчана уҫассăм килнĕ чух,
Кашни хутрах вĕриленсе чĕтретĕп.
Хăраса мар (о, ҫук! камран хăрас?
Ҫумрах ман хĕҫ, хураллăп-ха унпа еп
Хам ылттăна), ҫапах ман чĕрене
Темскер хĕсет, теме сисет чĕрем ман..
Ҫын вĕлерсе килленекен ҫынсем те
Пур, теҫҫĕ лекĕрсем пире. Аван пек,
Ҫав хушăрах хăрушă пек туйаҫ-тĕр
Вĕсем ҫынна ҫĕҫҫисемпе тирсен,
Еп те, ҫăрам ăшне уҫҫи хурсассăн,
Ҫавнах туйатăп.

(Арчине уҫать.)

Ак ман ырлăх-пурлăх!

(Укҫине хурать.)

Етем нушишĕн, йе ун шух чĕришĕн
Ҫитет сире тĕнче касма, ак выртăр,
Ҫыврăр кунта, ҫӳлти турăсем йевĕр,
Лăпкă та вăйлă улăп ыйхипе.
Пайан еп хамшăн мăн уйав тăвасшăн:
Кашни арча умнех ҫутам ҫурта,
Уҫам кашни арчине, пăхам вара
Йăл-йăлкăшан хам мулăмсем ҫине еп.

(Çуртасем çутса йарать, арча хыççăн арча уççа тухать.)

Еп патшара!.. Мĕн пек асамлă тĕс!
Хама пăхнан патшалăхăм ман вăйлă;
Кунта телей, кунта ман чысăм, чапăм!
Еп патшара!.. анчах ман хыççăн кам
Кунта пуç пулĕ? Манăн тĕпчĕк ывăл!
Ăс-тăнсăр йаш, тупра тустармăшĕ,
Пур аскăн çапкаланчăксен тус-йусĕ!
Еп вилнĕ-вилмен ак анĕ вăл—
Патша таврашĕнчи пур выçтахпа
Ман лăпкă, чĕмсĕр подвала.
Ман вилĕ çумĕнчен уççисене
Вăрласа илĕ те, ахăлтатсах
Вăл уçĕ мĕн пур арчамсене.
Атлăс шăтăк кăсйесене вара
Йухайса кайĕ мулăм. Вăл аркатĕ
Çын перĕнми та а чӳлмексенех те,
Тур çăвĕпе[9] ислетĕ пылчăка вăл,—
Тустарĕ вăл мана... Ун тивĕç пур-и
Кăна тума? Мана вара хам мулăм
Ахальҕ-и килнĕ, карт вăййинчи çын йевĕр
Кулсах пуçтарнă-и еп ăна? Пĕлсенччĕ,
Мĕнчул чăтăм, тăлланнă шухă ĕмĕт,

Ие йӑвӑр шухӑш, куç хупман каçсем,
Чӑркӑш кунсем тӳссе тертленмен-ши
Çак мулшӑн еп? Йе ывӑлӑм мана
Чӗрӳ мӑкланнӑ санӑн, ӗмӗте ес
Пӗлмен, пӗлмен ес, тейӗ, намӑса;
Намӑс—чуна чавакан кайӑк,
Парӑмне пӑвакан, йе минтревлӗ
Тус пек, чӗнмен хӑна пек пусан намӑс,
Каç уйӑха çисе, вилесене те тарӑхтарса
Шӑтӑксенчен çӗкленен вӑпӑр йевӗр
Киревсӗр намӑс—пӗлмен-ши еп ӑна?..
Çук! пуçтар малтан тертлӗн хӑв мул
на ес,
Хӑймӑттӑн тустарма ун чух ес, мӗскӗн,
Йун йухтарса пуçтарнӑ хӑв мулна.
О, еп подвалӑма пытарайсанччӗ
Тивӗçсӗр куçсенчен! Масар çинчен еп,
О, килейсенччӗ, сторӑж ӗмӗлки пек
Арчам çине ларса, чӗррисенчен
Хаљхи пек сыхласанччӗ хам мула!

III СЦЕНĂ

(*Дворецра.*)

Альбĕрпе Герцăг.

Альбĕр.

Ĕненĕр, герцăгăм, чылай еп тӳсрĕм
Чухăнлăх мăшкăлне. Нуша пулман-тăк,
Каламан та пулăттăм сире еп.

Герцăг.

Еп ĕненеп сире, хисеплĕ рыцăр,
Сирĕн пек çын айăплас çук ахальҫ
Хăй ашшĕне. Сахал халҫ ун пек пуҫсĕр...
Есĕр лăпкă пулăр: сирĕн аçăрпа
Калаçăп еп пĕччен, ним шав тумасăр.
Кĕтеп-ха еп ăна. Нумай пулаҫ-ха
Ăна еп курманни. Ман мучипе вăл
Пит туслă пулнă. Астăваш аван,
Ун чух ачаччĕ епĕ, вăл мана
Хăй ăйăрĕ çине йăтса лартса,

Иăвăр шлемне, чан ӳпĕнтернĕ йевĕр,
Ман пуç çине хураҫчĕ.—

(*Кантăкран пăхаҫ.*)

Кам-ши ку?
Вăл мар-ши-ха?

Альбĕр.

Чăн, герцăг, çав.

Герцăг.

Ес кĕр-ха
Вăн çав пӳлĕме.. Чĕнĕп сире.

(*Альбĕр тухса кайаҫ; Барон пырса кĕрет.*)

Герцăг.

Барон,
Сире сыв пуçпалан курма хавас еп.

Барон.

Есир чĕннипелен кунта килме
Ман вăй çитнишĕн еп, герцăг, телейлĕ.

Герцăг.

Чылай пулаҫ сире еп курманни.
Астăватăр-и мана?

Барон.

Сире-и, герцăг?
Халъхи пекех курап сире. О, есĕр
Йăрă ачаччĕ.—Сирĕн аçăр—герцăг

Калаҫҫӗ тек: Филипп (мана ҫапла
Чӗнетчӗ вӑл), мӗн калӑн, е? Тата
Ҫирӗм ҫултан ҫак шӗвӗр умӗнче,
Хай, сирӗн умӑрта ӗнтӗ, тӑмсай ҫеҫ
Пулса йулатпӑр епӗр...

Герцӑг.

Халь каллех те
Пӗр-пӗринпе туслашӑпӑр епир.
Ман ҫуртӑма мансах та кайрӑр есӗр.

Барон.

Еп, герцӑг, ватӑ ӗнтӗ: мӗн тӑвас-ха
Сирӗн ҫуртра ман? Есӗр ҫамрӑк; шеплӗ
Сире шав турнирсем те праҫниксем.
Еп йурӑхсӑр халь вӗсенче пулма.
Турӑ вӑрҫӑ парсан, еп хатӗрех
Ут утланма, чӗтревлӗ аллӑмпа еп
Хала пухса ку чух та сирӗншӗн
Хӗҫӗме ҫӗклемешкӗн вӑй ҫитерӗп.

Герцӑг.

Барон, сире пит палла сирӗн ӗҫӗр;
Тус пулнӑ есӗр мучипе; сире
Йуратнӑ ман атте. Сире йалан
Еп хам та харсӑр рыцӑр тенӗ,—ларӑр.
Тен сирӗн пур-тӑр ачасем?

Барон.

Пĕр ывăл.

Герцăг.

Мĕн-ма ăна еп хам çуртра курмастăп?
Ман çурт сире кичем, анчах ăна шепчĕ
Çамрăкскерне ман çуртăмра пулма.

Барон.

Шавлă мăн пурнăçа савмасть ман ывăл;
Кăмăлĕпе салхулă та тискер вăл—
Йупах пăлан пек сĕнксе çӳрет йалан вăл
Патри вăрмансенче.

Герцăг.

Тискерленни
Вăл лайăх мар. Часах та пирĕнпе ак
Хăнăхĕ балсемпе турнирсене вăл.
Кунта йарăр ăна; уйăрăр уншăн
Йатне кура çителĕклĕ укçа...
Есир салхулă темшĕн, ыртăр пулĕ
Есир тен.

Барон.

Çук, ырман-ха, герцăг, еп;
Ман шухăша пăтратрăр есĕр. Епĕ
Сире каласшăн марччĕ кун çинчен,
Анчах та есĕр ывăлăм пирки

Мĕн калас маррине уçса пама
Хушатăр халъ мана. Ман ывăл, герцăг,
Сирĕн хисепĕр, кăмăлăр хакне
Тăмасть вăл. Хăйĕн çамрăк пурнăçне
Тăрлавсăрран, пит шавлăн пурăнса
Вăл ирттерет халъ...

Герцăг.

Ку вăл пĕчченрен
Килет, барон. Пĕчченлĕх, ĕçсĕр пурнăç
Вăл пĕтерет çеç çамрăк çынсене.
Кунта йарăр ăна: йăлтах вăл манĕ
Тĕттĕм кĕтессенчи йăлисене.

Барон.

Каçарăр, герцăгăм, мана; анчах
Кунпа еп килĕшме пултараймастăп...

Герцăг.

Мĕн-ма апла?

Барон.

Хăтарăрсам ватта...

Герцăг.

Ыйтатăп еп: мĕскершĕн килĕшместĕр,
Пĕлтерĕр çăлтавне.

Барон.

Ывăл çине

Епе çиллĕ.

Герцăг.

Мĕн-ма?

Барон.

Тискер хăрушă ĕçшĕн.

Герцăг.

Мĕнле тискер ĕç вăл вара апла?

Барон.

Хăтарăр, герцăг...

Герцăг.

Епĕ ăнланмастăп,
Йе ывăлушăн намăс-и сире?

Барон.

Чăн... намăс...

Герцăг.

Мĕн турĕ вăл сире?

Барон.

Вăл... вĕлерме
Тăчĕ мана.

Герцăг.

Апла пулсан, халех
Вăл пуҫсĕре сута паратăп епĕ!

Барон.

Ĕнентермешкĕн тăрăшмăн сире еп,
Пĕлетĕп хăть, кĕтет вăл тем пекех
Ман вилĕме, пĕлеп, вăл тапăнчĕ
Мана...

Герцăг.

Мĕн?

Барон.

Çаратма.

(*Альбĕр пӳлĕме вăркăнса тухать.*)

Альбĕр.

Барон, суйатăр.

Герцăг (*ывăлне*).

Мĕнле хăйрăр?..

Барон.

Ес, ес!.. кунтах иккен!..
Ес аçунах çапла калатăн-и!..
Герцăг куç умĕнче суйап-и епĕ!..
Йе рыцăр мар-и еп?

Альбĕр.

Есир суйеç.

Барон.

Çаплах аçа çапмарĕ-и, турăçăм!
Çĕкле,—хĕç пултăр пирĕншĕн тӳре.

(*Перчаткине çĕре пăрахăт, ывăлĕ ăна васкавлăн çĕклесе илет*[10].)

Альбĕр.

Тавах. Ку сирĕн пирвайхи парне.

Герцăг.

Мĕскер куратăп епĕ? Ывăлъ хăйрĕ
Ват ашшĕпе çапăçăва тухма!
Мĕнле вăхăтсенче еп герцăгра
Ларатăп! Чарăнăр: ес те, тăмсай,
Ес те, тигр çӳри! Çитет! (*Ывăлне.*) Лăпланăр,
Кӳр, кӳр перчаткуна ес.

(*Перчаткине туртса илет.*)

Альбĕр (a parte*).

Шел.

Герцăг.

Йепле хыт тирĕнчĕ чĕрнисемпе
Ашшĕ çине вăл!—пуҫсĕр! Кайăр, кайăр:
Хам чĕниччен пачах ан курăнăр
Ман куç умне тек.

(*Альбĕр тухса кайать.*)

Намăса пĕлсемĕр
Кăштах, старик...

---

* Айăккала.

Барон.

Каçарăр, герцăгăм...
Хевте ман пĕтрĕ... ман чĕркуççисем
Хавшанчĕç... пит пăчăçке мана! Уççи?
Ăçта-ха ман... **уççи!..**

Герцăг.

Вăл вилчĕ! Турă!
О, путĕсĕр ĕмĕр, путĕсĕр чĕресем!

ЧУЛ ХĂНА

Leporello: O statua gentilissima
Del gran Commendatore!..
... Ah, Padrone!
Don Giovanni.

Лепорелло: О, аслă командорăн
хисеплĕрен те хисеплĕ кĕлетки!..
...Ай, хуçа!
Дон Жуан.

I СЦЕНĂ

Дон Гуан тата Лепорелло.

Дон Гуан.

Каçа кунта кĕтсе илер. Тинех
Умра Мадрит халхи! Часах ак епĕ,
Уссийĕме плашчпа, куçа шĕлепкепе
Витсе, тăван урамсемпе вĕçтерĕп.
Мĕнле шутлан? палламĕç-ши мана?

Лепорелло.

Ара! Дон Гуана паллама йăвăр!
Ун пеккисем темчул мар-и!

Дон Гуан.

Кулатăн?

Камах пĕлтĕр мана?

Лепорелло.

Кашни хуралçă,
Гитанă йе хĕрĕнкĕ музыкант,
Йе хăвăр пек пĕр-пĕр чарусăр качча,
Шпагăпала, плашчпа çӳрекенскер.

Дон Гуан.

Пĕлсессĕн те, мĕнех вара! Пĕртен-пĕр
Король курминччĕ. Еп, тепĕр тесен,
Мадритра никамран та хăрамастăп.

Лепорелло.

Йе ыранах пĕлес пулсан король
Дон Гуан ссылкăран хăй ирĕкпе тарса
Кунта килни çинчен—мĕн тăвĕ-ши вăл,
Калăр, сирĕнпе?

Дон Гуан.

Калла ăсатĕ.

Пуçах касаймĕç пулĕ, тетĕп, уншăн.
Патшалăхăн тăшманĕ мар вĕт епĕ.
Савса-тăрах мана вăл хуса йачĕ;
Вил çын килйышĕ Дон Гуана текех
Ан çыпçăнтăр тесе...

Лепорелло.

Çапла пулмасăр!
Лерех ларас мĕн сирĕн хускалмасăр.

Дон Гуан.

Ах, тӳрĕ тарçăм! Еп унта кăшт çеç
Вилмерĕм кичемпе. Мĕнле çынсем,
Мĕнле çĕршыв! А пĕлĕт!.. сĕрĕм тейĕн.
Хĕрарăмсем тата? Улăштарассăм çук,
Пĕлес тесен, айванăм Лепорелло,
Андалузин чи йапăх йал хĕрне
Унти чи йатлă пикепе—чăнах.
Еп кăмăллăрăм вĕсене малтан
Кăвак куçсемшĕн, шурă ӳтшĕн, сăпăшăн,
Чи ытларах—вĕсем çĕннишĕн;
Йураҫ, шĕкĕр турра, часах чухларăм —
Пĕлĕш пулма та çылăх вĕсемпе—
Вĕсем чун-чĕмсĕр, ăвăс пукане;
Пирĕннисем!.. Итле-ха, çакă вырăн
Пире йут мар; астурăн-и ăна?

Лепорелло.

Пĕлеп ара: Антони мăнастырĕ
Ман асăмрах. Есир килеттĕрччĕ кунта,
Еп утсене çак вăрманта чараттăм.

Ылханлă ĕç, чăнне калас пулсассăн.
Вăхăтсене манран шепрех ирттернĕ
Кунта есир.

Дон Гуан (*шухăша кайса*).

Ах, мĕскĕн чун Инезăˆ!
Вăл çук текех! саваттăмччĕ ăна еп!

Лепорелло.

Инезăˆ!—йĕпкĕн хура куç... Асрах вăл.
Унпа виç уйăх çӳресеччĕ есĕр;
Аран унран хăтарчĕ ыр усал.

Дон Гуан.

Ут уйăхĕ... çĕрле. Темле чеченлĕх
Туйаттăм вăл салхун пăхнисенче,
Ун сив тутисенче. Тĕлĕнмеле.
Ытла хитре теместĕнччĕ пулас-ха
Ăна ес. Тĕрĕс, вăл çаплах; сахалччĕ
Ун чăн-чăн чиперри. Куçсем, куçсем
Кăна. Куçпа пăхни... Ун пек пăхни
Асра та урăх çуккă. Сасси вара—
Йăваш, имшер--ăна ниш пуснă тейĕн.
Арçынĕ ун хайар, киревсĕр пулнă,
Кайран çех пĕлтĕм... Мĕскĕн чун Инезăˆ!..

Лепорелло.

Кайран урăххисем пулса вĕт.

Дон Гуан.

Тĕрĕс.

Лепорелло.

Сывах пулсан, татах та пулĕç акă.

Дон Гуан.

Çаплах.

Лепорелло.

Хаљ Мадритра хăшне шырар-ха?

Дон Гуан.

Лауpăна! Тӳрех унта чупатăп.

Лепорелло.

Селĕм.

Дон Гуан.

Кĕреп тӳрех—кам та пулин пулсассăн
Ун патĕнче— сиктерĕп кантăкран.

Лепорелло.

Паллах. Ну, савнăçлантăмăр. Пире
Вилесем нумайах пăлхантармаççĕ мĕн.
Пăх, кам килет?

(*Манах кĕрет.*)

Манах.

Халех вăл çитмеле. Кам
Кунта? йе Донă Аннă çынĕсем-и?

Лепорелло.

Çук, хамăр та улпут епир, кунта
Çӳретпĕр уçăлса.

Дон Гуан.

Кама кĕтетĕр есĕр?

Манах.

Кунта халь упăшкин тăпри çине
Килет ак Донă Аннă.

Дон Гуан.

Донă Аннă
Де Соль̆вă! мĕнле! командор măшри-и?
Кам вĕлернĕччĕ ăна... астумастăп?

Манах.

Турра пăрахнă аскăн Дон Гуан.

Лепорелло.

Охо! йепле вăл! Дон Гуан çинчен
Уллах мăнастыре те чĕвĕ çитнĕ мĕн,
Манах таврашĕ те мухтаť ăна.

Манах.

Ăна паллатăр пулĕ тен?

Лепорелло.

Епир? нимчул та,
Ăçта-ши халĕ вăл?

Манах.

Вăл кунта çук халь.
Вăл ссылкăра таçта.

Лепорелло.

Турра мухтав.
Мĕн чухлĕ инçерех, унчул аван.
Пур аскăна
Миххе чиксе ывтас çав тинĕсе.

Дон Гуан.

Ес мĕн суйан!

Лепорелло.

Шăпланăр: еп ахаль çеç...

Дон Гуан.

Командора кунта пытарнă-и?

Манах.

Кунта. Ун йачĕпе мăшрийĕ унăн,
Ав палăк лартнă. Ун патне куллен
Килет вăл упăшкишĕн кĕлтума, йĕме

Дон Гуан.

Йепле тĕлĕнмеле хĕрарăм вăл?
Хăй йапăх мар-и?

Манах.

Пирĕн, манахсенĕн
Хĕрарăм хитрипе çунма тĕс мар та,

Анчах та суйма çылăх; вăл чиперне
Угодник те тунма пултарас çук.

Дон Гуан.

Ахальтен мар măшри ун кĕвĕç пулнă.
Хупса усранă Донă Аннăна,
Курман вăл арăма пиртен пĕри те.
Ман каласӑсчĕ халĕ унпала.

Манах.

О, Донă Аннă арçынпа нихçан та
Каласмасть.

Дон Гуан.

А сирĕнпе, таса атте?

Манах.

Манпа хăть—урăх ĕç: манахçке еп.
Ав хăй те çитрĕ.

(*Донă Аннă кĕрет.*)

Донă Аннă.

Уçăрсам, аттемĕр.

Манах.

Халех, çенйорă: кĕтрĕм еп сире.

(*Донă Аннă манах хыççăн утать.*)

Лепорелло.

Ну, мĕнлерех?

Дон Гуан.

Нимĕскер те курăнмасҫ вăл
Хăйĕн хура хӳхлийĕ айĕнчен,
Еп ун ура кĕллине çеç кăшт куртăм.

Лепорелло.

Çитет сиртен. Ăс-пуçăр сирĕн
Ыттисене пĕр самантрах та сăнлĕ;
Художникрен те çивĕчĕ вăл сирĕн,
Сире çавах, кирек-мĕнрен пуçла хăҫ:
Куçхаршинчен-и, урисенчен-и.

Дон Гуан.

Епĕ
Унпа халъ паллашатăп.

Лепорелло.

Ак тата!
Çапла пулмасăр! Мăшăрне тӳнтерчĕ,
Халъ тăлăх арăм куççулъне курасшăн.
Намăссăрскер!

Дон Гуан.

Ĕнтĕ каç сăнĕ çапрĕ.
Каç сĕмлĕхне сирсе йама çут уйăх
Тухса улăхиччен утар-ха,
Кĕрер-ха Мадрита. (*Кайаҫ.*)

Лепорелло (*хăй ăссĕн*).

Испани гранчĕ, вăрă пек
Каҫа кĕтет, ҫут уйăхран хăраҫ—ай, тур-
ҫăм!
Ылханлă пурнăҫ. Манăн хăҫанччен-ши
Ҫӳрес унпа? Чăнах, пĕр хал йулмарĕ.

II СЦЕНĂ

(Пӳлĕм. Лаурă патĕнче каҫхи апат.)

Пĕрремĕш хăна.

Тупа тăвап сана, Лаурă, есĕ
Кун пек ăста нихҫан та вылăаман-ха.
Ытла тĕрес ăнланнă хăв ролăна!

Иккĕмĕшĕ.

Мĕнле вăйпа! йепле ăна вылăарăн ес!

Виҫҫĕмĕшĕ.

Мĕнле ăсталăхпа!

Лаурă.

Пайан, чăнах та,
Аван вылăарăм еп, аван калаҫрăм.
Йăлтах еп парăнтăм хавхалăха.
Аса илнипе мар, чĕрем ҫуратнăн
Шăранчĕҫ ман сăмахăмсем...

Пĕрремĕшĕ.

Ку тĕрĕс.
Сан халăх те йăлкăшаҫҫĕ куҫусем,

Питсем çунаççĕ, ес хавхаланни
Халъ те сӳнмен. Ăна пĕр усăсăр
Ан сӳнтерех, Лаурă; пĕр-пĕр йурă
Ес йурласа парсам.

Лаурă.

Гитарă кӳрĕр. (*Йурлать.*)

Пурте.

O, brava! brava! пит шеп! тĕлĕнмеле!

Пĕрремĕшĕ.

Тавтапуçах, асамлă хĕр. Чĕресене ес
Тыткăнлатăн. Çĕр çинчи килленӳрен
Пĕр йурату çеç музыкран иртет;
Анчах вĕт вăл та йурă-çемĕ... ес пăхсам:
Çемçелчĕ Карлос та, сан сив хăну.

Иккĕмĕшĕ.

Мĕн тĕрлĕ сасăсем! Мĕнчул чун-чĕм!
Сăмахĕсем камăн, Лаурă?

Лаурă.

Дон Гуанăн.

Дон Карлос.

Мĕн? Дон Гуан!

Лаурă.

Тахçан ăна çырсаччĕ
Ман çăмăлçах савни, ман тӳрĕ тусăм.

Дон Карлос.

Сан Дон Гуан турра пăрахнă, пуҫсĕр,
А есĕ, ес—ухмах!

Лаурă.

Ес ăсран тухса-им?
Халех сана касма хушатăп епĕ
Тарçăмсене, антив, хăҫ ес Испани гранчĕ.

Дон Карлос (*тăрать*).

Чĕнсем еппин.

Пĕрремĕшĕ.

Лаурă, чарăнсам;
Дон Карлос, ан çилен. Вăл манчĕ ĕнтĕ...

Лаурă.

Мĕне? Дон Гуан дуелре Дон Карлос
Шăллĕне персе вĕлернине-и? Питĕ шел,
Йурать хăйне тивмен.

Дон Карлос.

Каçар, айван еп.

Лаурă.

Ехе! хăв айванна хăв та тунмастăн.
Килĕшер еппин.

Дон Карлос.

Айăплă, Лаурă,
Каçар мана. Анчах, пултараймастăп

Еп çав йата ăш кăмăлпа илтме...

Лаурă.

Еп айаплă-ши-ха, минутсерен
Çак йат чĕлхем çине килет пулсассăн?

Хăна.

Пĕртте çиленменни çинчен пĕлтерччĕ:
Йурла тепре, Лаурă.

Лаурă.

Йураť—сире ăсатмала.
Киле кайма та вăхăт. Мĕн йурлам-ши?
Ну, итлĕр. (*Йурлаť.*)

Пурте.

Пит чипер, ытарайми!

Лаурă.

Сывпулăр, хăнасем.

Хăнасем.

Сывпул, Лаурă.

(Тухаççĕ. Лаурă Дон Карлоса чараť.)

Лаурă.

Йулсам, асар-писер! ес ман пата,
Мана ес килĕшрĕн; шăла çыртса
Йатлаçрăн та, мана Дон Гуана
Аса илтертĕн ес.

Дон Карлос.

Телейлĕскер!

Мĕнле ăна ес савнă?

(*Лаурă ăна савни çинчен пĕлтерет.*)

Пит те?

Лаурă.

Питĕ хытă.

Дон Карлос.

Халь те саван-тăр?

Лаурă.

Çакă минутра-и?

Çук, йуратмастăп. Тӳррех икке саваймăн.

Сана савап халь.

Дон Карлос.

Кала, Лаурă,

Миçе çулта ес?

Лаурă.

Еп вунсаккăрта.

Дон Карлос

Ес çамрăк халĕ... пулăн çамрăках

Тата пĕр пилĕк-ултă çул. Тата

Пĕр ултă çул ак йавăçĕç санпа,

Ачашлĕç, лăпкĕç, парĕç парнесем,

Серенадсем шăратĕç каçсерен;
Сана пула, уллах кĕтессенче,
Çĕрле, пĕрне-пĕри вĕлерĕçĕ.
Анчах çулсем иртсен, куçсем путсан вара,
Куçхупахсем пĕркеленсен,
Çивĕтӳнте кăвак çӳçсем çиçсессĕн,
Ватă карчăк шутне кĕртсен сана—
Мĕн калăн ес?

Лаура.

Унчух? Ма шухăшлас-ха
Хаҫ ун çинчен? Мĕн калаçас халех?..
Йе санăн йаланах çак шухăшсем?
Балкон уçсам. Йепле пит лăпкă пĕлĕт!
Лĕп сывлăш хумханмасть—лимон та лавăр
Шăрши килет çĕртен, çап-çутă уйăх
Çăра та тĕксĕм тӳпере йăлтрать—
Хуралçăсем тăсса калаç: *уйăр!..*
Тен Парижра—çурçĕр йенче, таçта,
Тӳпе пĕлĕтсемпе хупланнă пулĕ,
Сив çăмăр пĕрĕхет-тĕр, çил вĕрет пуҫ.—
Пире мĕн ĕç? Ах, итлесемччĕ, Карлос.
Кулсам, кулсам,—хушатăп еп сана...
— Çапла, аван!

Дон Карлос.

Савнă демăн!

(Шаккаççĕ.)

Дон Гуан.

Ей! Лаурă!

Лаурă.

Камсем унта? ку кам сасси?

Дон Гуан.

Уççам...

Лаурă.

Чăнах-ши!.. турă!..

(Алăкне уçаҫ, Дон Гуан кĕрет.)

Дон Гуан.

Сыв-и?..

Лаурă.

Дон Гуан!..

Дон Карлос.

Мĕн! Дон Гуан!..

(Лаурă Дон Гуан мăйĕнчен уртăнаҫ.)

Дон Гуан.

Лаурă, савнă тусăм... *(Чуптăваҫ.)*

Лаурăм, ку кам-ха санăн?

Дон Карлос.

Епĕ,

Дон Карлос.

Дон Гуан.

Кĕтменччĕ, йăнăш тĕлпулу!
Санпа ыран калаçăп.

Дон Карлос.

Çук!
Халех—çак сехетрех.

Лаурă.

Дон Карлос, чарăнăр!
Халех тухса кайсамăр.
Урамра мар есир—ман патăмра.

Дон Карлос (*ăна итлемесĕр*).

Еп кĕтеп.
Сан шпагă çумăнтах.

Дон Гуан.

Ес хăв, ехер,
Тӳсеймесен, пуçлар.

(Çапăçаççĕ.)

Лаурă.

Ай, ай! Гуан!..

(Тӳшек çине пырса вырттать. Дон Карлос ӳкет.)

Дон Гуан.

Тăрах, Лаурă. Кăнчĕ вăл.

Лаурă.

Мĕнле унта?
Вĕлертĕн? пит аван! ман пӳлĕмре!
Халь мĕн тăвас ман, есрелĕ, путсĕр?
Ăçта кайса ывтас ăна ман?

Дон Гуан.

Тен,
Вилмен те пуль. (*Ун ӳтне тытса пăхать.*)

Лаурă.

Вилмен! Пăхсам, ылханăш,
Чĕринченех ес чикнĕ—йăнăшман,
Сураннĕнчен тухмасть пĕр йун тавраш те,
Хăй сывламасть те —мĕнлерех?

Дон Гуан.

Мĕн тăвăн?
Çакна шыранă вăл.

Лаурă.

Ех, Дон Гуан,
Тарăхтарать ку. Ĕмĕр ашкăнан—
Çавах ес айăпсăр... Ăçтан-ха есĕ?
Хăçантанпа кунта?

Дон Гуан.

Халь тин-ха çитрĕм,
Çитменне вăрттăн каçарман мана.

Лаурă.

Тӳрех Лаурăна асилтĕн-и?
Мĕн лайăххи—вăл лайăх. Анчах та,
Еп ĕненместĕп: иртсе çеç пынă чух
Астурăн пулĕ ман киле.

Дон Гуан.

Лаурăм,
Лепореллоран ыйт. Хаљ еп
Хула тулашĕнчен, ылханлă вентăран
Сана шырасах килейрĕм Мадрита.

(*Лаурăна чуптăват.*)

Лаурă.

Тăхта... виле çинче!.. Мĕн тăвар-ха унпа?

Дон Гуан.

Ан тив, выртин,—кăвакçутла, ирех
Йепанчапа витсе еп илсе тухăп,
Урам тăваткăлне пăрахăп.

Лаурă.

Анчах асту—сана çынсем ан курччĕр.
Кăшт кайарах çитни питех аван!—
Ман патăмра сан тусусем каçтурĕç.
Хаљ çеç ăсатрăм. Курнăçнă пулсан!

Дон Гуан.

Хăçантанпа саватăн ес ăна?

Лаурă.

Кама? йӳтерĕн-им ес?

Дон Гуан.

Каласамччĕ:
Миçе хутчен мана ес улталарăн
Еп çук чухне?

Лаурă.

А есĕ, йанкăс?

Дон Гуан.

Кала... çук, çук, кайран калаçăпăр.

III СЦЕНĂ

(Командор палăкĕ.)

Дон Гуан.

Пурте ырра: Дон Карлоса сасартăк
Вĕлертĕм те, пĕччен пурăнасла
Пытантăм еп кунта—куллен куратăп
Еп тăлăх арăма, халь асăрханăн
Туйăнаť мана вăл. Хальчченех
Пĕр-пĕрнипе тӳрменленсе тăратпăр;
Пайан йумахлама пуçлап унпа;
Çитет. Мĕнрен пуçлам? „Хăйайăп-ши“...
йе çук.
„Çенйорă“... ай! пуçа мĕскер килет—
Çавна калăп, шухăшласа тăмасăр,
Савăш йуррийĕн йурлавçийĕ пек...
Çитме те вăхăт ĕнтĕ. Вăл çукран
Кичемленет пуль, тетĕп, командор.

Мĕнле ав улăп пек лараҫ кунта вăл!
Хулпуҫҫисем мĕнле! Геркулесах!
Хăй пĕчĕкчĕ, мухтанине саваҫчĕ,
Кунта, чĕрне вĕҫҫĕн тăрса та,
Хăй сăмсине ҫитме пултарас ҫук вăл.
Ескурйалта тĕлпулнă самантра
Ман шпагă ҫине лекрĕ те тăмарĕ,
Йĕп тăррине ҫакланнă шăрчăк пек.—
Мăнаҫчĕ хăй, хăйулă та хайарччĕ...
Ак! ҫитрĕ.

(*Донă Аннă кĕрет.*)

Донă Аннă.

Каллех кунта вăл. Аттеҫĕм,
Шухăшламашкăн чартăм пуљ, каҫарăр.

Дон Гуан.

Еп каҫару ыйтасшăн халь сиртен,
Ҫенйорă. Тен еп кансĕрлетĕп пулĕ
Хурлăхăра пĕр ирĕккĕн сирмешкĕн.

Донă Аннă.

Ҫук, апла мар, аттем, ман хуйăхăм—
ăшра,
Есир пур чух, ман кĕлĕсем ҫӳле
Йăвашшăн ҫитĕҫ—хăвăр сассăра
Ман кĕлĕпе пĕрлештерме ыйтатăп.

Дон Гуан.

Еп кĕлтăваймăп çавă сирĕнпе!
Ун пек телейшĕн тивĕç çук халь манăн.
Ман айăплă чĕлхем таса кĕлле
Хăйаймĕ каламашкăн сирĕнпе—
Еп айакран савса пăхап сире
Хура та вăрăм çӳçĕре шур мрамăр çийĕн
Сапаласан—вара çак тупăк патĕнче,
Чăн, ангĕл тăнăн туйăнаť мана,
Хумханнă чĕремпе еп ун чухне,
Çук, кĕлтăваймăп. Тĕлĕнсе шутлатăп:
Телейлĕçке çак сивĕ мрамăр витĕр
Сирĕн сывлăшăрпа ăшăнакан,
Чĕр савăш куççуль не йышăнакан.

Донă Аннă.

Ытла темле ку сăмахсем!

Дон Гуан.

Çенйорă!

Донă Аннă.

Мана... есир манатăр.

Дон Гуан.

Мĕне? Хам тивĕççĕр
Манах мĕнне-и? Çылăхлă сас-чĕвĕм
Кунта хыт йанрама тивĕççĕрне-и?

Донă Аннă.

Çапла пек туйăнчĕ... Еп ăнланмарăм...

Дон Гуан.

Ах, еп курап: йăлтах, йăлтах чухларăр!

Донă Аннă.

Мĕн пĕлтĕм-ши?

Дон Гуан.

Çук, епĕ манах мар—
Сирĕн умра еп каçару ыйтатăп...

Донă Аннă.

Ах, турă! тăрăр, тăрăр!.. Кам-ха есĕр?

Дон Гуан.

Еп сӳннĕ çуйкăнлăх парни, телейсĕрскер.

Донă Аннă.

Ах турăçăм! кунта, çак тупăк умĕнче!
Халех çухалăр!

Дон Гуан.

Ах, Донă Аннă,
Пĕр минута!

Донă Аннă.

Кам та пулин кĕрсен!..

Дон Гуан.

Решоткă хупă. Пĕр минут кăна!

Донă Аннă.

Ну? мĕн? Мĕскер ыйтатăр?

Дон Гуан.

Вилĕм!

Вилсе выртам еп сирĕн умăртах,
Ман мĕскĕн ӳтĕме кунтах пытарччĕр,
Есир саван виле патĕнче мар,
Мар, мар—кăшт айакка, пĕр-пĕр тĕле,
Ав, алăкран кĕрсе çӳрен çĕрех:
Ман чулăма, иртсе çӳренĕ чух,
Тен, çăмăл урăрпа, тумтирĕрпе
Сĕртĕнĕр, çак мăнаç тупăк патне
Кăтрăрсене сӳтсе, йĕрме килсен.

Донă Аннă.

Есир ăс-тăнран кайнă.

Дон Гуан.

Йе вара
Вилĕм ыйтни ăс çуккийĕн палли-и?
Ехер, ăссăр пулсан, еп чĕрĕ йуласса
Ăмсанăттăм, ĕмĕтленĕттĕм
Сире чи çепĕç савăшпа савмашкăн;
Ехер, ăссăр пулас пулсассăн, епĕ
Çĕр каçнă пулăттăм балконăр умĕнче,
Ăйăхăра йурăсемпе сирсе;

Пытанмăттăм унчух; ун вырăнне
Йалан сире курнасшăн çӳрĕттĕм.
Ехер, ăссăр пулас пулсан, пĕрре те
Асаплăха еп тӳсмĕттĕм чĕнмесĕр.

Донă Аннă.

Ак çак ĕнтĕ пĕр чĕнмесĕр тӳсни-тĕр?

Дон Гуан.

Ах, Дона Анна, самант,
Çак самант еп тӳсеймерĕм—ахалъ нихçан
Пĕлеймĕттĕр ман мĕскĕн чунăма.

Донă Аннă.

Чылайранпах саватăр-и мана?

Дон Гуан.

Чылайранпах-и, йе халъ çеç, пĕлместĕп.
Анчах çавăнтан çеç кĕске пурнăç
Хакне чухларăм; çавăнтан кăна
Пĕлеп „телей“ тени мĕн иккенне.

Донă Аннă.

Кайăр кунтан—есир хăруш етем.

Дон Гуан.

Хăруш! Мĕнрен?

Донă Аннă.

Хăратăп итлеме.

Дон Гуан.

Шăпланăп еп; ан хăварсам мана,
Сире курса çеç савăнакана.
Усал ĕмĕт чĕремре çук пĕрех те,
Ним ыйтмастăп; анчах сире ман кур
малах,
Ытах еп пурăнма тивĕç пулсан.

Донă Аннă.

Кайсамăр—вырăн мар кунта пĕрре те
Кун пек ăссăр сăмах-йумах валљљи.
Ыран ман киле пырăр. Халљхи пек
Хисеплĕ, чыслă пулас пулсассăн,
Сире кӳртĕп—анчах çĕрлерехпе:
Мăшăрсăр йулнă хыççăн—епĕ
Курнăçмастăп никампа та.

Дон Гуан.

Донă Аннă,
Йăпаттăр сире турă, пайан-кун
Есир телейсĕре йăпатнă пек.

Донă Аннă.

Кайсамăр ĕнтĕ.

Дон Гуан.

Тепĕр минута.

Донă Аннă.

Кайас пулҫ хамăн... Халҫ кĕлĕсем те
Аса килмеҫ. Йапшар сăмахсемпе
Йăлтах мантартăр есĕр. Вĕсенчен
Хăлхам та сивĕнни чылай пулать,
Ыран пырăр еппин.

Дон Гуан.

Шансах ҫитерейместĕп-ха,
Телейĕм пуласса кĕтме хăймастăп...
—Ыран сире куратăп!—кунта мар,
Вăрттăн та мар!

Донă Аннă.

Ҫапла, ыран, ыран.
Калăр йатăра.

Дон Гуан.

Диего де Калҫвадо.

Донă Аннă.

Сывпулăр, Дон Диего. (*Кайать.*)

Дон Гуан.

Лепорелло!

(Лепорелло кĕрет.)

Лепорелло.

Мĕн кирлĕ-ши тата?

Дон Гуан.

Савнă Лепорелло!
Тейлелĕ еп!.. Ыран—çĕрлерехпе...
Ей, Лепорелло, хатĕрле—ыран...
Пĕчик ача пекех телейлĕ еп!

Лепорелло.

Калаçрăр пулҫ çав Донă Аннăпа?
Сире вăл, тен, пĕр-икĕ ăш сăмах
Каларĕ пулҫ, йе хăйне ырлăх сунтăр-и?

Дон Гуан.

Çук, Лепорелло, çук! вăл курнăçма,
Вăл курнăçмашкăн пулчĕ!

Лепорелло.

Чăн та-и?
О, арсăр арăмсем, пурте çапла есир!

Дон Гуан.

Телейлĕ еп! Еп тем тума та хатĕр!

Лепорелло.

А командор? мĕн тейĕ ун çинчен?

Дон Гуан.

Вăл кĕвĕçĕ, тесе шутлатним есĕ?
Кĕвĕçес çук; вăл ăслă, тăнлă çын,
Вилнĕренпе лăпланчĕ пулĕ ĕнтĕ.

Лепорелло.

Çук; пăхăр унăн кĕлетки çине.

Дон Гуан.

Мĕнех вара?

Лепорелло.

Сирĕн çине пăхаŭ те,
Çиленет пек.

Дон Гуан.

Ну, Лепорелло, кай та
Чĕнсем ăна ман пата пымашкăн—
Çук, ман пата мар—мăшри патне, ыран.

Лепорелло.

Статуйăна чĕнес-и хăнана?
Мĕн-ма?

Дон Гуан.

Пĕлетĕн пулĕ ĕнтĕ,
Арăмĕпе каласа мар—пĕлтер,
Алăк панче хурал тăма, ыран,
Каçарахпа, мăшрийĕ патне пытăр.

Лепорелло.

Кулас килет иккен, тата камран!

Дон Гуан.

Ну, кай, кайах!

Лепорелло.

Анчах...

Дон Гуан.

Кайсам часрах!

Лепорелло.

Мухтавлă та илемлĕ кĕлетке!
Улпутăм Дон Гуан сире чĕнет...
Кăмăлтан чĕнет... Чăнах, пултарай-
мастăп,
Хăратăп.

Дон Гуан.

Хăравçă! ак еп сана!..

Лепорелло.

Тархасшăн.
Улпутăм, Дон Гуан, ыран каçпа
Măшру килне пырса алăк патне
Тăма чĕнет...

(*Кĕлетке, килĕшнине пĕлтерсе, пуçне сулать.*)

Ай, ай!

Дон Гуан.

Ку мĕскер?

Лепорелло.

Ай, ай!

Ай, ай!.. Вилеп!

Дон Гуан.

Мĕн пулчĕ-ха сана?

Лепорелло (*пуçне сулса*).

Хай кĕлетке... ай!..

Дон Гуан.

Тупата-и?

Лепорелло.

Еп мар, вăл хăй!

Дон Гуан.

Мĕн мурĕ сĕмленетĕн?

Лепорелло.

Килсемĕр хăвăр.

Дон Гуан.

Ну, пăхсам, тăрлавсăр.

(*Кĕлеткене.*)

Еп, командор, сана пыма чĕнеп
Мăшру патне: ыран унта пулатăп,
Ес тăрăн хурала. Мĕнле? Йураť-и?

(*Кĕлетке каллех пуçне сулать.*)

Ах, турă!

Лепорелло.

Каларăм вĕт!..

Дон Гуан.

Кайар.

IV СЦЕНĂ

(*Донă Аннă пӳлĕмĕ.*)

Дон Гуанпа Донă Аннă.

Донă Аннă.

Сире еп чĕнтĕм, Дон Диего; анчах
Хăрап, ман хурлă пуплешӳ хăнашăн
Кичем те пулĕ: мĕскĕн тăлăх арăм—
Мăшăрăма йалан асра тытап еп.
Куççуль ман кулăпала хутăш. Есир
Мĕн-ма чĕнместĕр?

Дон Гуан.

Киленеп чĕнмесĕр,
Илемлĕ Донă Аннăпа кунта,
Телейлĕ çын масарĕ çук çĕрте,
Уллаххăн пулнине ăша хурса,—
Ĕнтĕ сире сив мрамăр мăшăру умне
Чăркуçленмен чухне куратăп.

Доньă Аннă.

Дон Диего,
Йепле кӳлеш есир, йе тупăкран та
Вĕчĕхтерет-и манăн упăшкам?

Дон Гуан.

Манăн кĕвĕçме-и? Çук, ăна есир хăвăр
Савса суйланă.

Доньă Аннă.

Ах, çук: мана аннем
Дон Альварпа мăшăрланмашкăн хушрĕ,
Чухăнччĕ епĕр, Дон Альвар—пуйанччĕ.

Дон Гуан.

Телейлĕ çын! вăл уссăр мула
Пике-турă ури патне кӳнĕ,
Ак мĕнпе вăл рай ырлăхне активнĕ!
Пĕлсенччĕ еп сире—мĕнле хаваслăн
Хам йатăма, пурлăхăма, йăлт пĕтĕмпех
Пĕрре пăхнишĕн панă пулăттăм!
Еп сирĕн ирĕкĕн чури пулса,
Пурнăçăр йалан йумахри йевĕр
Пултăр тесе, кăмăлăра сиссе,
Пĕлсе—пурне те тунă пулăттăм.
Айух!—кепем мана урăххине пӳрсе.

Донă Аннă.

Диего, чарăнсамăр: çылăх пулĕ
Çак сăмаха итленĕшĕн—саваймăп
Еп сире, мăшăрăм тупăкне
Варламăп. Пĕлесчĕ сирĕн Дон Алъвар
Мана мĕнле савни çинчен! о Алъвар,
Урçа пулсан, урăх хĕрарăм хăй килне
Кӳртмен пулĕччĕ, вăл чыслă усрĕччĕ
Арлă мăшăр савăшне.

Дон Гуан.

Упăшкăра
Тек аса илсе асап ан кӳрĕр
Ман чĕреме. Ан хăртăр, çитĕ,
Тĕн пуçăма касма та тивĕç пулъ те...

Донă Аннă.

Мĕн пирки-ши? Есир вĕт никама та
Тупа туман ĕмĕрлĕхе—çапла-и?
Ман умăмра та, турă умĕнче те
Мана савнипе кĕместĕр çылăха.

Дон Гуан.

Ах, турă! Сирĕн умăрта!

Донă Аннă.

Есир
Мĕнпе-ши айăплă, пĕлтерĕр, ман умра?

Дон Гуан.

Çук, нихçан та калаймăп!

Донă Аннă.

Мĕскер-ха, Диего?
Йе айăп тунă есĕр? Мĕнле айăп?

Дон Гуан.

Калассăм çук!

Донă Аннă.

Тĕлĕнмеле, Диего,
Сиртен ыйтатăп, хушатăп.

Дон Гуан.

Çук, çук.

Донă Аннă.

Йепле итлетĕр епĕ хушнине!
Мĕскер каланăччĕ халь çех есир?
Чура пулма та хатĕрччĕçке маншăн.
Еп çиленеп, Диего: кĕтетĕп, калăр,
Мĕнпе-ши айăплă есир?

Дон Гуан.

Хăймастăп,
Курайми пулатăр мана есĕр.

Донă Аннă.

Çук, çук. Еп малтанах каçарăп,
Анчах пĕлесчĕ ман.

Дон Гуан.

Пĕлме ан шутлăр
Тискер, хăрушă, вилĕмлĕ ĕçе.

Донă Аннă.

Хăрушă ĕç!—есир мана хĕрхенĕр.
Çавтер ăмсанчăк еп--мĕнле ĕç? калăр.
Йепле çын кăмăлне хуçатăр есĕр?
Сире пĕлмен еп—тăшмансем ман çук,
Вĕсем пулман та. Пур пĕртен пĕрре,
Упăшкана вĕлерекен.

Дон Гуан (*хăйне хăй*).

Вĕçне
Çитсе пыраť ĕç-пуç! Пĕлтерĕрччĕ:
Пĕлмен-и есĕр мĕскĕн Гуана?

Донă Аннă.

Çук, çук, курман ăна еп нихăçан та.

Дон Гуан.

Ăшра есир халъ ун çине çиллес-и?

Донă Аннă.

Чыс ыйтнă тăрăххăн. Анчах есир
Ман ыйтăва сăмах айне тăвасшăн.
Дон Диего, еп хушап...

Дон Гуан.

Мĕн тăвăттăр,

Курас пулсан, Дон Гуана?

Донă Аннă.

Кинжал,
Кинжал лартăттăм чĕрине.

Дон Гуан.

Донă Аннă,
Ăçта кинжалăр? акă ман кăкăр!

Донă Аннă.

Диего, тетĕп! ăнланмасп, мĕн пулчĕ?

Дон Гуан.

Диего мар еп, еп—Гуан.

Донă Аннă.

Ах, турăçăм! Çук, вăл мар, еп ĕненместĕп.

Дон Гуан.

Еп Дон Гуан.

Донă Аннă.

Суйа.

Дон Гуан.

Еп санăн
Упăшкуна вĕлернĕ; кулăанмастăп
Вĕлернĕшĕн – каçару ыйтмастăп.

Донă Аннă.

Ах, мĕн илтеп! Пулма пултараймасть.

Дон Гуан.

Ен Дон Гуан, сана саватăп еп.

Донă Аннă (*ӳксе*).

Ăçта?.. ăçта еп?.. ай, пулăшăр!

Дон Гуан.

Ей, пĕлĕт!
Сана, сана мĕн пулчĕ, Донă Аннă?
Тăрсам, вăран, асту-ха: сан Диего,
Чуру сан урусем патĕнче.

Дона Аннă.

Ан тив мана!
(*Вăйсăррăн.*) Ес—ман тăшман, ес туртса илтĕн
Манне чи хаклине...

Дон Гуан.

Ыр пирĕшти!
Хам айăпшăн еп тем тӳсме те хатĕр,
Сан умăнта мĕн хушасса кĕтетĕп.
Ес хуш—еп вилĕп, ес хуш—татах еп сывлăп
Пĕр саншăн çеç...

Донă Аннă.

Апла ес Дон Гуан!..

Дон Гуан.

Пĕлетĕп еп—киреВсĕррĕн, усаллăн
Вăл сирĕншĕн сăнланнă—о, Донă Аннă.
Вĕçен сăмах суйах та мар, тен,
Ман ырнă чĕрене пайтах усал-тĕсел,
Тен, пуснă пулĕ. Епĕ чылай вăхăт
Ирсĕр аскăнăн чури пулса.
Анчах та, ак, сире курнăранпа
Еп тепĕр хут çуралтăм пулĕ, тетĕп.
Сире савса, ыр кăмăла саватăп,
Малтанхи хут ун умĕнче еп халĕ
Чĕтрев урамсемпе чăркуçланап.

Донă Аннă.

О, Дон Гуан йапшар чĕлхелĕ—илтнĕ,
Пĕлетĕп еп; вăл пит чейе ултавçă.
Есир чăн демăн. Калăр, миçе хĕрарăма
Есир пĕтернĕ?

Дон Гуан.

Вĕсенчен пĕрне те
Савман еп халиччен.

Донă Аннă.

Çук, ĕненместĕп—
Хальж Дон Гуан чăн-чăн савассине,
Тинех хĕрарăма хур тăвас çуккине!

Дон Гуан.

Ехер те улталас пулсан сире,
Есир илтме пултарайман йата
Кăларăп-ши, еп калăп-ши сире?
Ăçта кунта йĕтĕмленни, чейелĕх?

Донă Аннă.

Ăçтан пĕлен сире?—Анчах йепле-ха
Кунта килейрĕр! йе паллас пулсан,
Сире вĕлерєсси паллах кунта.

Дон Гуан.

Мĕнех вăл вилĕм? Çакă тĕлпулушăн
Еп пуçăма хуратăп пĕр ӳпкевсĕр.

Донă Аннă.

Йепле-ха тухăр кунтан, ех, сыхланчăксăр!

Дон Гуан

(*Донă Аннăна аллинчен чуптуса.*)

Мĕскĕн Гуанăн пурнăçне çапах та
Чăсасшăн ес. Ие курайманлăх çук-и
Таса та ырă чунăнта сан, Донă Аннă?

Донă Аннă.

Ах, курайми пулас пулсассăнччĕ!..
Анчах та пирĕн уйăрлас пулаҫ.

Дон Гуан.

Хăçан татах курнăçăпăр?

Донă Аннă.

Пĕлместĕп.

Пĕр-пĕр чухне.

Дон Гуан.

Ыран?

Донă Аннă.

Ăçта?

Дон Гуан.

Кунта.

Донă Аннă.

О, Дон Гуан, йепле чĕрем ман вăйсăр!

Дон Гуан.

Каçарнă йатпала пĕр чуптусамччĕ.

Донă Аннă.

Çитет, кайах.

Дон Гуан.

Пĕр сивĕ чуптăву çеç...

Донă Аннă.

Йепле хăпа пĕлместĕн! ак вăл, илсем. Тахшин шаккаŧ?!. пытанччĕ, Дон Гуан.

Дон Гуан.

Сывпул, курнăçиччен, йуратнă тусăм.

(*Тухса кайаŧ те каллех чупса кĕрет.*)

А!..

Донă Аннă.

Мĕн тата? А!..

(Командор кĕлетки кĕрет. Донă Аннă ӳкет.)

Кĕлетке.

Еп чĕннĕрен килтĕм.

Дон Гуан.

О, турă! Донă Аннă!

Кĕлетке.

Пĕтнĕ йăлт,
Пăрах ăна. Чĕтретĕн ес, Гуан.

Дон Гуан.

Еп? Çук. Сана чĕнсеттĕм епĕ хам,
Хавас курмашкăн.

Кĕлетке.

Пар аллуна.

Дон Гуан.

Ак манăн аллăм... Ай, йăвăр, йăвăр
Унăн чул алли чăмăртанийĕ.
Ан тив мана, йарсам алла, йарсамччĕ...
Пĕтетĕп еп—пĕтрĕм—о, Донă Аннă!

(Путса анаççĕ.)

ĂНЛАНТАРСА ПАНИ.

1 Р ы ц ă р. Феодаллă йĕрке вăхăтĕнче Хĕвеланăç Йевропăра пĕр йатлă çынран тепри мĕнпе уйăрăлса тăнине кăтартакан тĕрлĕрен титул йĕркисем пулнă. Айалти вырăнта ахаҫ рыцăрсем хисепленсе тăнă, вĕсем „вассалсем" пулса, титул илнĕ çӳлти дворйансене—герцăгсемпе графсене йе хăш чух тӳрех те патшана пăхăнса тăнă. Рыцăр йĕрки пур йатлă çынсем хушшине те сарăлнă, ку тĕлĕшрен вара титул илнĕ йатлă çын та рыцăр пулса тăнă. Тĕрĕссипе рыцăр (нимĕçле „рейтер"—йуланутçă) хĕçпăшалпа авăрланса ут çинче çӳрекенскер пулнă, вăл хăй çумĕнче пĕрре йе темиçе тарçă—„оруженосцăсене"—тытса тăнă.

Пушкин ку произведенийе акăлчансен трагедийĕнчен илсе çырнă тени тĕрĕс мар. „Хыткукăр рыцăр"—оригиналлă произведени. Ăна Пушкин 1830 çулта кĕркунне Болдино йалĕнче („йалти шăплăхра") çырнă.

2 Т у р н и р с е м — хĕçĕсемпе тата сăнăсемпе авăрланса, икĕ ушкăна уйăрăлса çапăçнă рыцăрсен

çапăçăвĕ. Ку çапăçăва çӳлти йатлă çынсемпе йатлă дамăсем курма пухăннă, çапăçу праçник пек чаплăн иртнĕ. Çапăçакан рыцăрсем çапăçнă чух ӳте сыхлас майпа пуçа хурçă шлѣом тăхăнса, кăкăрĕсем çине кăкăр питлĕхĕ витсе йанă. Кунсăр пуçне сулахай ал çине шчит тăхăнтартнă, унпа вĕсем çапнисенчен сыхланнă. Хаклă хурçăран туса ылттăн тĕрĕсемпе çырса ерешлентернĕ латтăсем питех те хаклă тăнă.

3 Паж—„хисеплĕ" çемйере ӳснĕ ача йе йашă, вĕсем çӳлти йатлă çынсене пăхăнса тăнă

4 Геролѣдсем—ăçта кирлĕ унта çуйăхса çапкаланса çӳрекенсем, вĕсем турнирта çапăçакан рыцăрсен йачĕсене кăшкăрса, турнир çапăçăвĕ мĕнле иртни çинчен калаçа пĕлтернĕ.

5 Йусман (талисман)—халлап тăрăх, мĕнле те пулин етем тума пултарайман асамçăлă хăватлă вăй паракан йапала—йе алла тăхăнмали çĕрĕ, йе кăкăр умне çакса çӳремели пĕр-пĕр палăлă шăкăрча. Чăвашсем ĕлĕк хăш-хăш çĕрте мĕне те пулин тухатма тесе йатарласа çăнăхран пĕçернĕ пĕчĕкçеç пашалăва йусман тенĕ.

6 Алжир—Çурçĕр Африкăри хула, ĕлĕк хура чурасемпе (негрсемпе) сутă тунă пĕртен-пĕр пысăк рынăк (пасар).

7 Иудă—авалхи суйа халлап тăрăх Христосăн вуникĕ вĕренекенĕсенчен пĕри, вăл Христоса вăтăр кĕмĕл укçала („серебреникле") Иеруса-

лимри пуп пуçлăхĕсене (первоçвйашченниксене) тата Рим влаçне тытса панă пулаť.

8 Дублон—испанцăсен авалхи ылттăн укçи, вăл нимĕçсен пĕр ылттăнмарки чухлĕ тăнă.

9 Турă çăвĕ (йелей)—хаклă та тутлă шăршăсемпе шăршăлан.арса пĕçернĕ çу. Турă çăвĕпе патшасене патшана ларнă чух сĕре-сĕре йанă

10 Перчаткине пăрахаť—пит çине йе çĕре ывăтнă перчаткă пĕр-пĕрне хирĕç çапăçăва тухма чĕннине пĕлтернĕ. Кайарахри вăхăтсенче ку сăмаха литературăра кирек мĕнле те пулин çапăçăва чĕннине пĕлтерекен сăмах туса усă курнă.

Т У П М А Л И

Стр.

Хыткукар рыцăр (*Н. Йанкас* куçарнă) . . . 7

Чул хăна (*Ив. Ивник* куçарнă) 37

Хакё
Цена 1 р. 20 п. к.

0-12

17455

А. С. ПУШКИН

МАЛЕНЬКИЕ ТРАГЕДИИ

НА ЧУВАШСКОМ ЯЗЫКЕ

ЧУВАШГОСИЗДАТ ● 1938